Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

24 (7985) № * Шăмат кун, 2012 çулхи пуш (март) уйăхĕн 31-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Тутлă апат-çимĕç ăстисем

*Професси ăсталăхĕн конкурсĕсене ирттернин пĕлтерĕшĕ пĕчĕк мар. Çакă пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма май парать, ĕçлекенсен ответлăх туйăмне, вĕсен професси ăсталăхĕн шайне ӳстерме пулăшать. Черетлĕ конкурс Муркаш райповĕн «Радуга» кафере мартăн 29-мĕшĕнче иртрĕ. «Районти 2012 çулхи чи лайăх повар» конкурса 10 ăста хутшăнчĕ. Çĕнтерӳçĕсене виçĕ номинацире палăртрĕç. Çапах та чи пултарулли вара Муркаш «Радуга» кафе поварĕ Ольга Ильина (сăн ӳкерчĕкре малти ретре сылтăмран иккĕмĕшĕ) пулчĕ.*

*Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.*



## Патшалăх пулăшăвĕ витĕмлĕрех пулĕ

***Мартăн 30-мĕшĕнче республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Ен Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе ĕçлĕ тĕл пулу ирттерне. Унта вăл агропромышленноç комплексĕн ыйтăвĕсемпе Воронежра тата Чул хулара çак эрнере ирттернĕ канашлусемпе паллаштарнă.***

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх Раççей Правительствин Председателĕ Владимир Путин çĕр-шывăн агропромышленноç комплексĕ умĕнче тăракан проблемăсене ăнланать. Çанталăк условийĕсене пула çур аки кампанийĕ кăнтăрти регионсенче те 2–3 эрне юлса пырать. Апла пулин те ял хуçалăх отраслĕнче пысăк кăтартусем пулмалла.

Правительство çăмăллатнă майпа дизель топливи уйăрмалли лимитсене пысăклатас шухăшлă. Ку вăл ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсем уйăрса панă лимитсемпе мĕнле усă курма пултарнипе çыхăннă. Паянхи куна çăмăллатнă майпа уйăракан топливо рынок хакĕнчен 30 процент йӳнĕрех. Çăмăллатнă майпа топливо уйăрассин калăпăшне 15 процент ӳстернĕ.

Владимир Путин палăртнă тăрăх çакă Раççей аграрийĕсене 11 млрд. тенкĕ перекетлеме май парĕ. Пĕтĕмпе вара патшалăх агропромышленноç комплексне пулăшма уйăракан укçа-тенкĕ калăпăшĕ 4,5 млрд. тенкĕпе танлашать. 2000 çулта ку сумма 350 млн. доллар пулнăччĕ.

Хальхи вăхăтра ял хуçалăх предприятийĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Анчах та патшалăх пулăшни уйрăм хуçалăхсенче кирлĕ эффект параймасть. «Хăçан та пулин çапах эпир пахалăхлă, конкурентлă тавар туса кăларакан, тухăçлă ĕçлекен предприятисене субсидилесси çине куçатпăрах», – палăртнă ку тĕлĕшпе Михаил Игнатьев.

Çавăн пекех мелиораци енĕпе патшалăх пулăшăвне ӳстерме пăхнă, унччен ял хуçалăх предприятийĕсем илнĕ тавар кредичĕ енĕпе ыйтăва татса параççĕ. Ют çĕр-шыв техники туянма илекен кредитсен процент ставкисене субсидилессине те çĕнĕрен йĕркелеме палăртаççĕ.

Сĕтĕн сутăн илмелли хакĕ пирки уйрăммăн чарăнса тăнă. Ăна чакарасси вырăнти продукци тирпейлекенсен пуçарăвĕпе пулса пырать. Михаил Игнатьев ку ыйтăва куç ытамĕнчен вĕçертмелле марри пирки асăрхаттарнă. Магазинта литр сĕт 30 тенкĕ тăрсан, ăна тăваканăн сахалтан та 14 тенкĕрен кая мар илмелле, тенĕ вăл.

**Çур акине хатĕрленетпĕр**

## Çур аки ирттерме

Çур аки ăнăçăвĕн никĕсĕнче пĕрремĕшĕ вăл – пысăк репродукциллĕ вăрлăх. Паян çакна ăнланса çĕнĕ вăрлăх туянассипе ĕçлекенсене ырламалла кăна. Пуш уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне районти хуçалăхсем пурĕ 105,5 тонна элита тата супер элита сортлă вăрлăх туяннă. Çав шутра «Путь Ильича» агрофирма хамăр районти Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнчен 40 тонна урпа тата 20 тонна çурхи тулă туяннă. И. Петрова хресчен (фермер) хуçалăхĕ те паха вăрлăх туянма патшалăх паракан пулăшăва илессинчен пăрăнман. Çакна валли асăннă хресчен (фермер) хуçалăхĕ «Приволжское» вĕрентӳпе сăнав хуçалăхĕнчен 10 тонна урпа тата 3 тонна çурхи тулă вăрлăхĕ туянма пултарнă. Ытларах вăрлăх туяннисем хушшинче «Оринино» хуçалăх та пур. Вĕсем паянхи кунччен «Герой» хуçалăхран сĕлĕн элита сортне 12 тонна туяннă.

Пысăк репродукциллĕ вăрлăх туяннăшăн патшалăх Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин бюджечĕсенчен кашни тонна пуçне пĕрчĕллĕ культурăсемшĕн 8900 тенкĕ, кĕрпелĕх культурăсемшĕн 11700 тенкĕ, пăрçа йышши культурăсемшĕн 12150 тенкĕ, çĕр улмишĕн 13380 тенкĕ субсидилет. Малашлăха пăхакансем çак пулăшупа туллин усă курасса шанас килет.

## Пирĕн агроном палăрнă

Пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче «Август» фирма» хупă акционерлă общество Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствипе тата Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕпе республикăри ял хуçалăх предприятийĕсен агрономĕсен 2-мĕш олимпиадине ирттерчĕ. Республикăри вуншар агрономпа пĕрле хăйсен пĕлĕвне çак ăмăртура Муркаш енри специалистсем те тĕрĕслерĕç. Вĕсем: «Ва-Сем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн агрономĕ Лариса Варсонофьевна Тойгильдина, «Путь Ильича» агрофирмăн тĕп агрономĕ Николай Геннадьевич Белов тата район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Александр Ильич Павлов.

Пĕтĕмлетӳре пирĕн районти «Путь Ильича» агрофирмăн тĕп агрономĕ Н. Белов ыттисенчен ытларах балл пухса олимпиада çĕнтерӳçи пулса тăнă. Çакăншăн вăл олимпиада йĕркелӳçисенчен паянхи кун ыйтакан ноутбук илме тивĕçнĕ. Кунпа пĕрлех Николай Геннадьевич çитес кĕркунне агрономсен Мускавра иртекен Раççейри олимпиадине хутшăнма та ирĕк çĕнсе илнĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Çанталăк**

## Çуркунне васкамасть

Мартăн 29-мĕшĕнче Раççей Гидрометцентр директорĕ Роман Вильфанд юр Мускав регионĕнче тепĕр уйăх выртасси çинчен пĕлтернĕ. Кăçал юр çивиттийĕ хулăнран вăл нормăран 10 кун ытларах тытăнса тăрассине калонă.

Мускав тăрăхĕнче юр апрель вĕçĕччĕнех выртать, палăртнă Вильфанд. Мартăн 20-мĕшĕ хыççăн юр нумай çурĕ. Юр хулăнăшĕ халĕ 42 сантиметр, çак вăхăта вара вăл 20 сантиметр шайĕнче пулмалла.

Пирĕн тăрăхшăн çуркунне хăй йĕркипех килет, палăртнă Вильфанд. Апла пулин те вăл 5–6 кун кая юлса килнине йышăннă. Март уйăхĕ ытти çулхисенчен 1 градус кăна сивĕрех пулнă.

Кăçал 10 градуслă ăшăна чылай кĕтме тивет.

**Диспансеризаци пырать**

## Сывлăхшăн тăрăшмалла

Сывлăха тăтăшах тĕрĕслени чир-чĕре вăхăтра тупса палăртма пулăшать. Диспансеризаци пирки шăпах çакна каламалла.

Кăçал хушма диспансеризаци вăхăтĕнче районти 986 ĕçлекен çынна тĕрĕслеме палăртса хунă. Кунсăр пуçне февральтенпе планпа пăхнă диспансеризаци те пырать.

Диспансеризаци – тӳлевсĕр тĕрĕслев. Унта хутшăнакансем хирург, гинеколог, офтальмолог, терапевт, невролог врачсем патĕнче пулса сывлăха тĕрĕслеме пултараççĕ. Кунсăр пуçне – тĕрлĕ анализсем парса та. Диспансеризацие тивĕçлĕ пахалăхпа ирттерме больницăра çĕнĕ оборудовани çителĕклĕ. Сăмахран, больницăра маммограф пулнăран халĕ хĕрарăмсене Шупашкара тĕрĕслеве илсе каймалла мар. Çапла майпа вăхăт та перекетленет.

Диспансеризаци тĕрĕслевне тухма палăртнă пулсан кашнинех çине тăрса участок врачĕсем е пĕтĕмĕшле практика врачĕсем патне пымалла.

Диспансеризацие вĕçленĕ май пĕтĕмлетĕве тĕрĕслев тухнă çынсене вĕсен сывлăх шайне кура ушкăнсем çине уйăрса тăваççĕ. Ăна участокри терапевт е пĕтĕмĕшле практика врачĕсем пĕлтереççĕ. Пĕрремĕш ушкăна сыввисене кĕртеççĕ. Иккĕмĕшне – чире пуçарма пултаракан факторсемпе çывăх пулнисене. Виççĕмĕш ушкăна чирлисем кĕреççĕ (организмра чир паллисене тупса палăртнисем). Тăваттăмĕш ушкăнра – стационарта сиплемелли чирсемпе чирлекенсем тата çӳллĕ шайри технологиллĕ медицина пулăшăвĕ кирлисем.

Сывлăха упрас тесе пурин те тăрăшмалла. Врачсен сĕнĕвĕсене пурнăçламалла.

**С. ГУСАК,**
**Муркашри тĕп больницăн поликлиника ертӳçи.**

**Йышăну**

## Ĕç сыхлавĕпе – уйăхлăх

Мартăн 28-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ районта ĕç сыхлавĕ енĕпе уйăхлăх иртересси пирки калакан 291 № йышăну çине алă пуснă. Уйăхлăх апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 30-мĕшĕччен иртет. Ăна Ĕç сыхлавĕн пĕтĕм тĕнчери кунне халаллană. Харпăрлăх формине пăхмасăрах пур предприятисемпе организацисенче те çынсен ĕç условийĕсемпе сывлăх сыхлавне лайăхлатассипе мероприятисем ирттерме сĕннĕ.

**Хамăр инф.**

**Призыв**

## Çара кайма ят тухсан

ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕ 2012 çулхи апрель –май уйăхĕсенче çурхи призыв ирттерет. 1985–1994 çулсенче çуралнă тата сывлăх тĕлĕшпе юрăхлă яшсене çар ретне ăсататпăр.

Призыва хутшăнакансен сывлăхне медкомисси тĕрĕслет. Пур медицина документсене тĕпченĕ тата медицина тĕрĕслевĕ ирттернĕ хыççăн призывник çара кайма юрăхлă е юрăхлă пулманнине палăртаççĕ.

Медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухнă хыççăн çамрăк çынна çара кайма юрăхсăр е вăхăтлăх юрăхсăр тесе палăртнă пулсан, унăн диагноза çирĕплетме ЧР Çар комиссариатĕнче çарпа врач комиссийĕнче пулма тивет. Çавăн хыççăн кăна çара кайма юрăхсăрри пирки заключени пама пултараççĕ.

Яшсене çар ретне тăма хатĕрлес тĕлĕшпе Çар комиссариачĕн пайĕ вĕсене ДОСААФ организацийĕсем урлă «С», «ВС», «Д», «Е» категорисемлĕ водителе вĕренме яма пултарать. Кун пек кăмăл пулсан Çар комиссариачĕн пайне пырас пулать.

Вăрттăнлăх мар, хальлĕхе çара каяссинчен, хăйсен Конституци тивĕçне пурнăçлассинчен пăрăнса çӳрекенсем те çук мар. Кун пеккисен ашшĕ-амăшне асăрхаттарас килет: ывăлăра административлă е уголовлă майпа ан айăплаччăр тесен, ăна çавăн пирки ăнлантарса пама ан ӳркенĕр.

Çавна та каласа хăвармалла. Çар тивĕçне пурнăçлассинчен пăрăнакансенчен çуррине яхăн сывлăхĕсем тĕлĕшпе çара кайма юрăхсăр. Комисси çирĕплетĕвĕпе вĕсене тахçанах çар билечĕ памалла ĕнтĕ. Анчах та вĕсем Çар комиссариачĕн пайне пыма тăхтаса тăраççĕ, тарса çӳреççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсем, ывăлăра пытарса усрама кирлĕ мар. Саккуна пăсма юрамасть. Çара каяссипе çыхăннă пур ыйтупа та пирĕн пата пыма пултаратăр.

**А. КОЧУРОВ,**
**ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕн пуçлăхĕ.**

## Заявленисем йышăнатпăр

Кăçалхи февралĕн 21-мĕшĕнче Чăваш Республикин «О дополнительных мерах государственной поддержки семей, имеющих детей» 1 № Саккунне йышăннăччĕ. Асăннă Саккунпа килĕшӳллĕн кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çемьере 3-мĕш е хыççăнхи ача çуралнă е ача усрава илнĕ пулсан, республикăри ача амăшĕн (çемье) капиталĕ шучĕпе 100 пин тенкĕ уйăрса пама пăхнă. Ку тĕлĕшпе эпир халĕ заявленисем йышăнма тытăнтăмăр. Тивĕçлисен социаллă хӳтлĕх пайне 123-мĕш кабинета пымалла. Ыйтса пĕлмелли телефон: 62-5-09.

**Районти социаллă хӳтлĕх пайĕ.**

# Ырантан пенси виçисем ӳсеççĕ

## Пенси ыйтăвĕсемпе

***Апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенси, федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен укçан паракан тӳлевсен тата социаллă пакет виçисем ӳсеççĕ.***

**Пур йышши пенси виçисем те ӳсеççĕ. Вăл шутра:**

– ватлăха, инвалида тухнине тата çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан ĕç пенсийĕн страхлакан пайĕ 3,41 процент ӳсет (2012 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç пенсийĕсене 7 процент индексациленĕ пулнă);

– патшалăх пенсийĕсем (социаллă пенси, вăрçă инваличĕсемпе участникĕсене, вилнĕ çар çыннисен ашшĕ-амăшне паракан иккĕмĕш пенси, ытти йышши пенси) 14,1 процент ӳсет.

Малтан шутласа пăхнă тăрăх, апрельте пенсисене ӳстернипе ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи Чăваш Республикипе 300 тенкĕ пысăкланать, 8775 тенкĕпе танлашать. Ку вăл республикăра пенсионера пурăнма кирлĕ минимумран (4169 тенкĕ) 2,1 хут пысăкрах. 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 7934 тенкĕпе танлашнă. Районĕпе асăннă пенсин вăтам виçи 273 тенкĕ ӳсет, 7719,52 тенкĕпе танлашать.

Социаллă пенсисен вăтам виçи 630 тенкĕ ӳсмелле, 5140 тенкĕпе танлашмалла (кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăл 4510 тенкĕ пулнă). Районĕпе вара социаллă пенси виçи вăтамран 640 тенкĕ пысăкланать, 5261,19 тенкĕпе танлашать.

Чăваш Республикинче 343,9 пин пенсионерăн пурин те пенси виçи ӳсет. Вăл шутра ватлăха, инвалида тухнипе тата çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан пенси илсе тăракан 316,2 пин, патшалăх пенсине илсе тăракан 27,7 пин çыннăн та. Пирĕн районпа илсен 9943 пенсионерăн пенси пысăкланать. Вăл шутра ĕç пенсийĕ илсе тăракан 9037 тата патшалăх песнийĕ илсе тăракан 906 çыннăн.

Çапла вара пенсионерсен пурнăç шайне лайăхлатас тĕллевпе пенси виçисене ӳстернипе пенси тӳлеме каякан тăкаксем республикипе уйăхне 111 миллион тенкĕ ӳсеççĕ. Çулталăкĕпе çавна валли 1 миллиард тенкĕ хушма укçа-тенкĕ уйăрма тивет. Районĕпе уйăхсерен пенси тӳлеме уйăракан укçа-тенкĕ виçи 3 миллион тенкĕ ӳсет.

**Апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен укçан паракан тӳлевсен, çавăн пекех соцпакет виçи 6 процент ӳсет.** Çав тĕллевпе малашне уйăхсерен республикипе 11,5 миллион тенкĕ, çулталăк вĕçлениччен 103 миллион тенкĕ ытларах укçа тăкакланать.

Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен соцпакет хакĕ апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса уйăхне 795 тенкĕ те 88 пус пулать. Вăл шутран эмел пайĕ – 613 тенкĕ, санаторипе курорт пайĕ – 94 тенкĕ те 83 пус, транспорт пайĕ (хула тулашĕнчи поездпа тӳлевсĕр çӳресси, санатори çул укçи тӳлемесĕр кайса килесси) – 88 тенкĕ те 5 пус.

**Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене хăш ушкăна кĕнине кура уйăхсерен укçан çакăн чухлĕ тӳлеме тытăнаççĕ:**

| Çăмăллăхсемпе усă куракансен категорийĕсем | Уйăхсерен укçан паракан хушма тӳлев (ЕДВ) виçи апрелĕн 1-мĕшĕнченпе (тенкĕпе) | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | Унпа усă курмалли правăна сыхласа хăварсан | | | | | |
| | Соцпакетпа туллин усă курсан | Соцпакетпа пачах усă курмасан (795,88) | Эмел пайĕ (613,00) | Санаторипе курорт пайĕ (94,83) | Транспорт пайĕ (88,05) | Эмелпе санаторипе курорт пайĕ (613,00+94,83=707,83) | Транспортпа эмел пайĕ (613,00+88,05=701,05) | Транспорт тата санаторипе курорт пайĕ (88,05+94,83=182,88) |
| Вăрçă инваличĕсем | 3038,77 | 3834,65 | 3221,65 | 3739,82 | 3746,60 | 3126,82 | 3133,60 | 3651,77 |
| Вăрçă участникĕсем | 2080,10 | 2875,98 | 2262,98 | 2781,15 | 2787,93 | 2168,15 | 2174,93 | 2693,10 |
| Çар çыннисем, тăлăх арăмсем | 355,26 | 1151,14 | 538,14 | 1056,31 | 1063,09 | 443,31 | 450,09 | 968,26 |
| Çапăçусене хутшăннă ветерансем | 1313,92 | 2109,80 | 1496,80 | 2014,97 | 2021,75 | 1401,97 | 1408,75 | 1926,92 |
| 1-мĕш ушкăн инваличĕсем | 1888,87 | 2684,75 | 2071,75 | 2589,92 | 2596,70 | 1976,92 | 1983,70 | 2501,87 |
| 2-мĕш ушкăн инваличĕсем тата инвалид ачасем | 1121,45 | 1917,33 | 1304,33 | 1822,50 | 1829,28 | 1209,50 | 1216,28 | 1734,45 |
| 3-мĕш ушкăн инваличĕсем | 738,97 | 1534,85 | 921,85 | 1440,02 | 1446,80 | 827,02 | 833,80 | 1351,97 |

Чăваш Республикинче федераллă çăмăллăхсемпе усă куракан 112 пин çын уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕ илсе тăрать. Вĕсенчен ытларахăшĕ (91 пин çын) – инвалидсем. Районĕпе федераллă çăмăллăхсемпе 3091 çын усă курать, вăл шутра инвалидсем – 2271 çын. Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем шутне çавăн пекех Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инваличĕсем, ытти çапăçусене хутшăннисем тата вилнĕ салтаксен мăшăрĕсем, радиаци катастрофисене пĕтерме хутшăннисем тата граждансен ытти категорийĕсем кĕреççĕ.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

## Саламлатпăр



Ятман ялĕнче пурăнакан **Зоя Митрофановнăпа Герман Михайлович ИВАНОВСЕН** апрелĕн 1-мĕшĕнче пĕрлешнĕренпе 50 çул çитет. Эпир вĕсене çак уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр, пире пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр. Тавах сире ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, яланах пире ăшă кăмăлпа кĕтсе илсе ăсатса янишĕн.

**Саламлаканĕсем: Митрофановсен, Шушуновсен, Красильниковсен, Леонтьевсен, Лебедевсен çемйисем, ял-йыш тата пускилсем.**



Çак кунсенче Юнкă ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Çатракасси ялĕнче нумай çул хушши библиотекăра чунне парса халăхшăн тăрăшса ĕçлекен **Вена Петровна КОНУЗИНĂНА** сумлă юбилейпа чун-чĕререн тухакан мĕн пур ăшă та çепĕç сăмахсемпе хĕрӳллĕн саламлатпăр. Пурнăçра çирĕп сывлăх, тулли телей, тату пурнăç, çемьере килĕшӳ, ăнăçу, вăрăм кун-çул, малалла та такăр çулпа утма Турри вăй-хăват патăр. Ырă кăмăлушăн, сăпайлăхушăн, ĕçченлĕхӳшĕн хисеплетпĕр сана.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, аппăшĕсем, йăмăкĕ çемйисемпе.**

Ятман ялĕнче пурăнакан **Зоя Митрофановнăпа Герман Михайлович ИВАНОВСЕМ** пĕрлешнĕренпе апрелĕн 1-мĕшĕнче 50 çул çитет. Ĕмĕрĕ ĕçсĕр иртмен вĕсен, иккĕшĕ те К. Иванов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра ĕçлесе пенси çине тухнă. 50 çул пĕр-пĕрне килĕштерсе, юратса пурăнаççĕ. Çак юратнă, килĕштернĕ çынсене юбилей ячĕпе саламлатпăр, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатпăр. Сирĕн пата пырса çӳреме пире питĕ кăмăллă. Татах та нумай пурăнма сĕнетпĕр.

**Салампа: Лебедевсен, Леонтьевсен çемйисем тата пускилсем.**



Чи юратнă хаклăран та хаклă аннене, хунямана, асаннене, кукамая, йăмăка – Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Римма Демьяновна ОРЛОВĂНА** 70 çулхи юбилейпа саламлатпăр.

Сан паян çуралнă кун –
Çитмĕл çул вăл çич çул мар.
Утса тухма çăмăл мар.
Малашнехи пурнăçа
Пурăнмашкăн нимĕн те мар.
Анчах ватлăх çывхарать,
Сывлăхне та хавшатать.
Эс пире ялан кĕтен,
Кукăльне те пĕçерен
Сăрине те вĕретен.
Çапла пултăрччĕ ялан
Ырă кăмăллă анне.

Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр. Эсĕ пурри пирĕншĕн – телей. Малашнехи пурнăçра çирĕп сывлăх та телей сунатпăр. Пурăн çĕр çулччен пире савăнтарса.

**Салампа: ывăлĕсем, кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, аппăшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, Скворцовсем, Ошмановсем, Михайловсем, Гавриловсем, пускилсем.**

Пирĕн хисеплĕ те юратнă çыннăмăр – Отарккă ялĕнче пурăнакан **Анна Ивановна ИВАНОВА** – çак кунсенче хăйĕн юбилейне паллă тăвать. Çак ятпа эпир ăна чун-чĕререн тухакан чи ăшă туйăмсемпе саламласа ырлăхсывлăх сунатпăр. Турри сана чир-чĕртен, инкек-синкекрен сыхласа, вăй-хал парса тăтăр. Ырă кăмăлна, эсĕ пире те, ялти ытти çынсене те яланах пулăшнине кура санăн кун-çулу та вăрăм килтĕр. Эсĕ пирĕншĕн чăнах та ырă тĕслĕх. Эпир пурте сана чĕререн юрататпăр.

**Саламлаканĕсем: Афанасьевсем ачисемпе мăнукĕсемпе пĕрле, Ивановсем.**



Март уйăхĕн 28-мĕшĕнче Итакачкасси ялĕнче пурăнакан **Раиса Николаевнăпа Владимир Афанасьевич СКВОРЦОВСЕН** пĕрлешни 50 çул çитрĕ.

Юратнă аттепе аннене, асаттепе асаннене, кукамайпа кукаçие юбилей ячĕпе саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх сунатпăр. Эсир пур чухне эпир телейлĕ.

**Салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

## Редакци почтинчен



# Библиотека ĕçĕпе кăмăллă

Пирĕн шкул ачисем уроксем хыççăн пушă вăхăтра час-часах Анаткас ялĕн библиотекине васкаççĕ. Галина Андреева вĕсене интереслĕ кĕнекепе паллаштаратех. Хальхинче Валентина Пугачева çырнă «Осьминожек» кĕнекене илчĕç. Пьесăсен ку кĕнеки ачасене чăнахах та кăмăла кайнă. Унта вĕсене вырăсла та, чăвашла та пичетленĕ.

Пуринчен ытларах вĕренекенсене «Тăварлă мороженăй» килĕшнĕ те вĕсем ăна хăйсем лартса пăхас шут тытнă. Ăна пăхма пире те, ашшĕ-амăшне, чĕнчĕç. Ку пьесăри ĕçсем хальхи ачасемпе паянхи кун пулса иртеççĕ. Çавăнпа ачасем питĕ интересленеççĕ те ĕнтĕ унпа.

Ачасем пьесăна питĕ лайăх вылярĕç. Пьесăн шухăшне те, темине те вĕсем хăйсем витĕр кăларчĕç. Унти сăнарсене Галина Павловна питĕ тĕрĕс суйласа илнĕ, кашни ача хăйĕн сăнарне тивĕç.

Кунта ытларах эпир ача-пăча хушшинчи хутшăнусене куратпăр. Вĕсем хăйсене тĕрлĕ лару-тăрура мĕнле тытмаллине питĕ меллĕ кăтартрĕç. Пире пьеса питĕ килĕшрĕ. Галина Павловнăна пысăк тав сăмахĕ калас килет пирĕн ачасене çакăн пек ĕçе явăçтарнăшăн.

**И. ПАНОВА,**
**учительница.**

**Сăн ӳкерчĕкре: пьесăри пĕр сцена.**

# Çынсене савăнăç парнелекенсем

## Халăх пултарулăхĕ

Ярапайкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Екрем» халăх фольклор ансамблне районта е республикăра кăна мар, вĕсен тулашĕнче те чылайăшĕ аван пĕлет. Коллектив хăйĕн пуян программипе конкурссене, смотрсене тăтăшах хутшăнать, çитĕнӳсем тăвать. Юлашки çулсенче кăна çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пулса хамăрăн несĕлсен йăли-йĕркипе, пултарулăх енĕсемпе паллаштарма ĕлкĕрнĕ.

Фольклор ансамблĕн историйĕ район историйĕпе пĕр ӳсĕмре темелле. Пуçласа ăна 1944 çулта йĕркеленĕ. Ун чухне вăл хор коллективĕ шутланнă. Коллективва К.М. Мамаев ертсе пынă. Хыççăн чылай вăхăт – 1945 çултан тытăнса 1980 çулччен – коллектив ертӳçинче Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А.К. Константинов тăрăшнă. Вăл ертсе пынипе хор 1947 çулта Мускавра Пысăк театрта хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Çакна вăл 1946 çулта республикăри художество пултарулăх смотрĕнче пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме пултарнипе тивĕçнĕ. А.К. Константиновăн ĕç-хĕлĕн вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ питех те пысăк. Вăл юрăна юратакансен темиçе ăрăвне çул панă, çак тапхăрта ял çыннисем хор искусстви çине пачах урăх куçпа пăхма тытăннă темелле.

1982 çултанпа хор коллективне И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн музыкăпа педагогика факультечĕн выпускникĕ, Чăваш Ен композиторсен ассоциацийĕн членĕ В.А. Романов ертсе пырать. Коллективăн пултарулăх шайне районти тата республикăри йĕркелӳ комитечĕсен нумай Хисеп грамотисемпе дипломĕсене çĕнсе илме пултарни те çирĕплетет.

1993 çулта коллектива К. Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕн артисчĕ Николай Григорьев ертсе пырать. Çавăнтанпа коллектив халăхăн вырăнти юрри-кĕвви, йăли-йĕрки çине тимлĕх ытларах уйăрма тытăнать. Çапла Н. Григорьев сценарийĕпе Ярапайкассисем чăвашсен «Çĕнĕ пӳрт ĕçки» йăли-йĕркине сцена çинче сăнласа параççĕ. Ку программăпа коллектив фольклор ушкăнĕсен зона конкурсĕнче хăйне лайăх енчен кăтартать, республикăра пуçласа ирттерекен «Сăрпа Çавал çаврисем» фольклор уявне хутшăнма тивĕçет.

Апла пулин те коллектив хор коллективĕ шутланнă, композиторсен произведенийĕсемпе пĕрлех чăваш халăх юррисене те халăх умне кăларнă. 1997 çулта вара коллектив умне çак ыйту тăнă: е хор коллективĕ пулса юлмалла, е ĕç-хĕл енне улăштармалла, фольклорпа ĕçлеме тытăнмалла. Пĕртен-пĕр тĕрĕс йышăну тума çăмăл пулман. Çапах та коллектив тĕрĕс çул суйласа илни куç кĕрет. Йышăну тунă чухне çавна та шута илнĕ. Районта хăйсен пултарулăхĕпе палăрма ĕлкĕрнĕ юрăпа ташă халăх ансамблĕсем пĕрре кăна мар, анчах та фольклор ушкăнĕсем çук.

Коллектив ертӳçисем В.А. Романовпа Н.Л. Григорьев Культура çурчĕн директорĕпе Ф.Ф. Паргеевăпа пĕрле ялти фольклор традицийĕсене çĕнĕрен чĕртес, çул парас тесе сахал мар тăрăшнă. «Салтака ăсатни», «Çĕнĕ пӳрт ĕçки», «Улах», «Туй» йăла-йĕркесене сцена çинче сăнланă, вырăнти тата çемьепе йăлари юрăсене вĕреннĕ, халăх çипуçне майлаштарса йĕркене кĕртнĕ.

Халăх йăли-йĕркисене пропагандăлас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн «Екрем» ансамбле 1998 çулта халăх ятне панă. 1999 çулта ансамбль халăх пултарулăхĕн пĕтĕм Раççейри «Атăл тăрăхĕн çăл куçĕсем» фестивалĕн лауреачĕ, 2000, 2001 тата 2004 çулсенче вара – республикăри «Сăрпа Çавал çаврисем» тата «Ĕмĕрсен эрешĕсем» фольклор уявĕсен лауреачĕ пулса тăнă.

Коллектив республика тулашне те тăтăшах тухса çӳрет. Çакă ыттисен опычĕпе паллашма, хăйсене кăтартма та май парать. Иртнĕ çул та Оринкинти Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуракăш» юрăпа ташă халăх ансамблĕпе пĕрле Ульяновск хулинче иртнĕ пĕтĕм чăвашсен «Акатуй» уявне хутшăнма тивĕçнĕ.

Чылай вăхăт хушши хор тата ансамбль участникĕсем çемье династийĕсем пулнă. Кусем вĕсем Дашковсен, Суховсен, Сорокинсен, Дмитриевсен, Архиповсен, Шумиковсен, Ивановсен династийĕсем.

Хальхи вăхăтра коллективра 20 çын ытла. Коллектив тĕшши – хăйсен пурнăçне сценăпа çыхăнтарнă çемье мăшăрĕсем. Кунта чи малтанах Полинăпа Петр Сорокинсене, Людмилăпа Николай Шумиковсене, Валентинăпа Сергей Матюшкинсене, Евгенияпа Николай Дашковсене, Людмилăпа Николай Григорьевсене, Светланăпа Виталий Романовсене, Людмилăпа Марс Ивановсене, Валентинăпа Михаил Григорьевсене, Тамарăпа Александр Горшковсене асăнмалла.

Ансамбль çумĕнче ачасен «Ярапа» фольклор ушкăнне йĕркеленĕ. Вăл ачасен республикăри «Пĕчĕк çеç путене» фольклор фестивалĕн лауреачĕ.

**Н. ЕГОРОВА,**
**район администрацийĕн культура пайĕн информаципе методика центрĕн заведующийĕ.**

Полици хроникинчен

## Халĕ урăхла тав тăваççĕ

Нискассинче пурăнакан пĕр каччăна темĕн килĕшмен килĕнче: Турра тав, ашшĕ пурăнать, ватă асламăшĕ те пенси укçипе пулăшнах пулĕ. Ку вара çемьере çĕрле сиксе тухнă хирĕçӳре хăйне тытса чараймасть. Ашшĕне те, аслăмăшне те пуçран йывăç пуканпа çапать. Çамрăк чух вăй пур çав. 60-тан иртнĕ арçынпа 90 çула çывхаракан карчăк ăна мĕнле хирĕç тăрччăр ĕнтĕ... Çак каччă сĕтел айĕпе пĕшкĕнмесĕр утса çӳренĕ чухне хăйсем çименнине ăна çитерсе арçын ачана вăй кĕртнĕ курăнать. Халĕ вара çамрăксем ак мĕнлерех тав тăваççĕ. Атте-аннене хисеплесси пирки шутласси çук, ытларах чухне «мана кирлĕ», «мана парăр» теççĕ кăна.

## Ӳсĕрле руль умне лармалла мар

Çул çинчи инкексенче вăхăтсăр çĕре кĕнисен шучĕ çулсеренех пĕр-пĕр вăрçăра пуç хунисем чухлех. Вăй питти çынсем, ача-пăча сарăмсăр вилни кашнин чĕринех пырса тивмелле пек, анчах та хăйсен сăмсинчен инçе курас теменнисем те нумай-ха пирĕн хушăра – эрех ĕçсе руль умне ларакансем. Манпа нихăçан та нимĕн те пулма пултараймасть теççĕ-ши? Саккунсене вара пĕлĕтрен илмен, пурнăç кăтартнипе йышăннă.

Акă иртнĕ кунсенче Мăн Сĕнтĕр урамĕсем тăрăх вăтăртан иртнĕ арçын эп эрех ĕçнине хам кăна пĕлетĕп, тесе çăмăл машинăпа ирĕклĕн ярăнса çӳренĕ: ГИБДД инспекторĕсем чариччен. Юрать-ха нимĕнле инкек те пулман. Административлă йĕркене пăснăшăн штраф тӳлени ун çине витĕм курĕ-ши?

**Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Прокуратурăра

## Ыйту-хурав

***«Ман организаци ĕç-хĕлне прокуратура ĕçченĕсем тĕрĕслерĕç, тĕрĕслев пуласси пирки вара саккунпа килĕшӳллĕн маларах пĕлтермелле мар-ши?»***

Муркаш сали.

**Ку ыйтăва эпир район прокурор пулăшуçине А. ЧЕРНОВА патăмăр.**

– 2008 çулхи 294-ФЗ номерлĕ «О защите прав юридических лиц и индивидуальных предпринимателей при осуществлении государственного контроля» Федераллă саккунра пăхнă йĕркесем прокуратура ĕçченĕсем ирттерекен тĕрĕслеве пырса тивмеççĕ. Çавăн пекех «О прокуратуре РФ» саккунра, ведомствăллă хушусенче, норматив документчĕсенче прокуратура тĕрĕслевĕсен тапхăрĕсем тата тĕрĕслев пуласси пирки пĕлтермеллине палăртман.

## Судмедэкспертиза уйрăмĕн çитменлĕхĕсем

Район прокуратури судмедэкспертиза уйрăмĕнче тĕрĕслев ирттернĕ. Анчах та кунти ĕç-хĕл Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçланман, хăш-пĕр ĕçе ирттерме лицензи пулман. Çавăн пекех судмедэкспертиза ĕçĕсене пурнăçлама саккун ыйтнă оборудованисемпе тивĕçтерсе çитермен. Асăннă уйрăмра сивĕтмĕш камерисем вырнаçтарман пирки вилнĕ çынсене Шупашкар хулинчи ятарлă учрежденисене илсе кайма тивет, çакă вĕсен çывăх çыннисене хушма тăкак кӳрет. Çапла вара çитес вăхăтра ответлă ĕçченсен тĕрĕслев вăхăтĕнче палăртнă çитменлĕхсене пĕтермелле, çакна прокуратура асăрхаттарăвĕнче çирĕплетнĕ.

**А. ЧЕРНОВ,**
**прокурор пулăшуçи.**

Хастар вĕренекенсем

## «Орленока» кайма тивĕçрĕç





***Чăваш Енри вунă пултаруллă ача çитес кунсенче Хура тинĕс хĕрринчи «Орленок» лагере тухса каять. Хастар вĕренекенсен ретĕнче пирĕн районти икĕ хоккеист та пур. Нумаях пулмасть Мускав облаçĕнче иртнĕ Раççей ăмăртăвĕнче республика чысне хӳтĕленĕ Роман Куликов (сăн ӳкерчĕкре) тата Владимир Михайлов çак чыса тивĕçнĕ. Муркашри тата Юнкăри вăтам шкулсенче вĕренекенскерсем федераллă шайри лагерьте вĕренӳре те, обществăлла мероприятисенче те хăйсене тивĕçлипе кăтартасса шанатпăр.***

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Кĕнеке вуланă хыççăн

## «Телей тăрăшмасăр килмест»

Кĕнекесем вулама килĕштернĕрен эпĕ час-часах ялти библиотекăра пулатăп. Нумаях пулмасть мана Зоя Ивановна библиотекарь Марина Карягинăн «Кăтра хĕвел çаврăнăш» кĕнекине вулама сĕнчĕ. Кĕнекери калавсемпе халапра хăвна валли ырă сĕнӳ-канаш тупма пултаратăн, тесе ахаль каламарĕ мĕн вăл мана. Кĕнекене вуласа тухсан эпĕ çакна тӳрех ăнланса илтĕм. Уйрăмах «Кăтра хĕвел çаврăнăш» халап килĕшрĕ.

Халапра Кӳлленчĕк Хĕвелпе Çăлтăра та тус пулма пĕлмеççĕ, тет. Пĕри кăнтăрла кăна, тепри вара каçпа кăна ăшăтать, тесе ӳпкелешет. Çак вăхăтра вара шăпах унăн çĕнĕ тус тупăнать – Курăк. Вăл Кӳлленчĕке пĕр чăнлăх пĕлтерет: «Телей вăл – ыттисене савăнтарнăшăн чун-чĕрене килекен пысăк савăнăç», – тет.

Телей тăрăшмасăр килмест тени те пур халапра. Чăтăмлăх чылай кирлĕ иккен пурнăçри хутшăнусенче. Çакна Курăк – каярах Хĕвел çаврăнăш пулса тăнăскер – питĕ лайăх ăнлантарса парать. Телей вăл тата çумра чăн-чăн тус пулни, «сивĕре те, ăшăра та» пăрахманни.

Ку халап кашни ачанах юлташ мĕнле пулмалли пирки, телей мĕнлерех тутăллă пулни çинчен шухăшлаттаракан халап. Çавăнпа та хамăн юлташсене, тантăшсене эпĕ çак кĕнекене вуласа тухма сĕнетĕп.

**Вероника НИКОЛАЕВА.**

Чуманкассинчи вăтам шкул.

Спорт

## Муркашсен – 18 медаль!

«Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн» акци вăхăтĕнче (вăл майăн 1-мĕшĕччене пырать) В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн Муркаш, Çатракасси тата Очăкасси уйрăмĕсенчи спортсменсем Туçи Çармăс районĕн уçă ăмăртăвне хутшăнчĕç. Ачасене вĕсен тренерĕсем И. Смирнов, Н. Скворцов тата Н. Степанов хавхалантарса тăчĕç. Пирĕн çамрăк спортсменсем пурĕ 18 медаль çĕнсе илчĕç.

Çĕнтерӳçĕ ятне Анастасия Барминова, Сергей Павлов, Стас Степанов, Наталья Кольцова (Çатракасси уйрăмĕ), Алексей Трофимов, Анна Пушкова (Муркаш) тата Сергей Васильев тивĕçрĕç. Валера Борисов (Çатракасси), Светлана Иванова, Анжела Федорова, Арина Иванова, Сергей Белов (Муркаш) тата Ирина Замятина (Кашмаш) «кĕмĕл» çĕнсе илнĕ. Виççĕмĕш вырăнсенче: Гена Васильев (Йӳçкасси), Стас Григорьев (Çатракасси), Галина Михайлова, Анна Милютина (Муркаш) тата Леонид Трофимов.

Çакăн чухлĕ ачана хаваслă туйăм парнелерĕ спорт ăмăртăвĕ. Унта çитсе килме вара вĕсене Александр Валерьянович Иванов пулăшрĕ. Ăна пысăк тав.

**А. ПЕТРОВ,**
**спорт шкулĕн завучĕ.**

## Зонăри ăмăртуран – финала

Чăваш Республикин Физкультурăпа спорт тата туризм министерстви ишекенсем валли йĕркеленĕ «Сенкер хум» фестиваль зонăсемпе иртет. Ăмăртусене районсемпе хуласенчи физкультурăпа спорт комплексĕсен пĕрлештернĕ командисем хутшăнаççĕ.

Иккĕмĕш зонăра – Етĕрне хули, Муркаш тата Кӳкеç поселокĕ – ăмăртусем мартăн 22-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче иртрĕç. Ăмăрту программи питĕ пуян пулчĕ: тĕрлĕ мелпе ишесси, тĕрлĕ ӳсĕмри уйрăм ишекенсем, тĕрлĕ ӳсĕмри эстафетăсем...

Хĕрӳ кĕрешӳре Муркашсем ыттисене чылай кайра тăратса хăварма пултарчĕç. Пĕтĕмĕшле 901 очко пухса командăсем хушшинче мала тухрĕç. Иккĕмĕш вырăнта – «Присурье» ФСК (Етĕрне), «Улăп» ФСК (Кӳкеç) виççĕмĕш вырăнта.

Уйрăм ишевсенче пирĕн районти çамрăк спортсменсем пурĕ 28 медаль çĕнсе илме пултарнă. Эстафетăсенчи кăтартусем те япăх мар: кĕçĕн арçын ачасен команди пĕрремĕш, аслă арçын ачасен команди иккĕмĕш, аслă хĕр ачасен команди пĕрремĕш вырăнсене тухма пултарнă.

Халĕ Муркашсем финал ăмăртăвне хутшăнма хатĕрленеççĕ.

**Хамăр инф.**

Объявление

### ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Кадастровым инженером Чернобровенко И.В., являющимся сотрудником ООО НПП «Компьютерные технологии», почтовый адрес: 394000, г.Воронеж, ул. Ф.Энгельса, д.5, адрес электронной почты: npp@comp-tech.ru, контактный телефон 8(473) 2-555-372, 2-522-638, в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:00:000000:4, занятых объектом недвижимости: воздушная высоковольтная линия электропередачи 220кВ Чебоксарская гидроэлектростанция – Венец с отпайкой на электрическую подстанцию компрессорной станции «Чебоксарская», расположенного Чувашская Республика нач. тр. г. Новочебоксарск, ул. Набережная, д. 44, проходит по Чебоксарскому, Моргаушскому, Аликовскому, Шумерлинскому р-ам, оконч. г. Шумерля, ул. Промышленная, д. 6, выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы и площади.

Заказчиком кадастровых работ является: Открытое акционерное общество «Федеральная сетевая компания Единой энергетической системы»

(ОАО «ФСК ЕЭС») (117630, г. Москва, ул. Академика Челомея, д. 5а, тел. (495) 234-73-06).

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ земельных участков состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, в фойе 1-го этажа администрации Моргаушского района Чувашской Республики «04» мая 2012г. в 16 часов 00 минут.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 394000, г.Воронеж, ул.Ф.Энгельса, д.5, либо направить запрос по адресу электронной почты: npp@comp-tech.ru с «18» апреля по «04» мая 2012г., тел. 8-923-609-69-53 (отв. Кастрикин Алексей Васильевич), тел. 8-919-242-242-5 (отв. Попов Михаил Юрьевич).

Обоснованные возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с «18» апреля по «04» мая 2012г. по адресу электронной почты: npp@comp-tech.ru, тел. 8-923-609-69-53 (отв. Кастрикин Алексей Васильевич), тел. 8-919-242-242-5 (отв. Попов Михаил Юрьевич).

Правообладатели смежных земельных участков, с которыми требуется согласовывать местоположение границ (декларативно стоящих на кадастровом учете) расположенных в кадастровых кварталах: 21:17:280702, 21:17:280901, 21:17:281001.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

Объявления

**Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

Администрация Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 31 марта 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учетом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

в) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика – от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления (по 30 апреля 2012 года включительно) по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: с.Большой Сундырь, ул.Советская, д.16.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 69-3-01, факс 69-1-13, эл. почта mrgsund_pos@cdx.ru, официальный сайт администрации Большесундырского сельского поселения.

---

**Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

Администрация Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 31 марта 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учетом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

в) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика – от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления ( по 30 апреля 2012 года включительно по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: д.Москакасы, ул.Московская, д.54.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 66-2-85, факс 66-4-00, эл. почта mrgmocka_pos@cdx.ru, официальный сайт администрации Москакасинского сельского поселения.

**Постановление администрации Москакасинского сельского поселения от 29.03.2012 г. №17**

**О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст.28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003 года №131-ФЗ «Об общих принципах местного самоуправления в Российской Федерации», ст.14 Устава Москакасинского сельского поселения Моргаушского района ЧР постановляю

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 13 апреля 2012 года в 15 часов 00 минут в здании администрации Москакасинского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика , Моргаушский район, д. Москакасы, ул. Московская,д.54.

2. Настоящее постановление подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Глава администрации Москакасинского сельского поселения А.Н. МАТРОСОВ.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использовании земельного участка»**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного Кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:092701:760 площадью 2281001 кв.м., из категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:092701, разрешенное использование для «для сельскохозяйственного производства» на «дачное строительство».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 13 апреля 2012 года до 9- 00 часов.

# Телепрограмма

**со 2 по 8 апреля 2012 года**

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 02.04

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.35, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!»
10.55 Модный приговор
12.20 «Криминальные хроники»
12.55 «Право на защиту»
14.00 Другие новости
14.20 Понять. Простить
15.15 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.00 Т/с «СЕРДЦЕ МАРИИ»
18.45 «Давай поженимся!»
19.50 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ОТРЫВ»
22.30 «Краткий курс счастливой жизни»
23.35 «Познер»
0.50 «Городские пижоны». «Белый воротничок»
1.45, 3.05 Х/ф «КОНЕЦ РОМАНА»
3.50 «Евгений Матвеев. Всем сердцем - раз и навсегда»

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «С новым домом!»
9.45 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 16.45, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
13.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 «Брачное агентство Николая Баскова»
18.50 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ШАПОВАЛОВ»
22.55 Т/с «ЛЕКТОР»
23.55 «Дежурный по стране». Михаил Жванецкий
0.50 Вести +
1.10 «Профилактика»
2.20 Т/с «БИЛЛ ИНГВАЛ-2»
4.10 «Городок»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия
**На канале «Россия-2»**
9.10-9.15 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

7.00 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15, 1.40 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10 «Большое видится на расстоянии... Ольга Моисеева»
12.50 Сказки из глины и дерева. Дымковская игрушка
13.05 «Линия жизни»
14.00, 23.50 Х/ф «ВЫСОКАЯ НАГРАДА»
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 М/ф «Приключения Хомы»
16.00 Д/с «Дневник большой кошки»
17.00 «Л. Пантелеев. Приоткрытая дверь».
17.30 «Звезды мировой оперы»
18.40 Д/ф «Коллективное сознание»
19.45 Главная роль
20.00 «Сати. Нескучная классика...»
20.40 «Острова».
21.25 Academia
22.15 «Тем временем»
23.00 «Тарковские. Осколки зеркала»
1.25 Д/ф «Мировые сокровища культуры»
2.35 Ф. Шуберт. Интродукция и вариации

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.30 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Х/ф «БРАТАНЫ»
21.25 Т/с «УЧАСТКОВЫЙ»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 Честный понедельник
0.25 «Школа злословия». Денис Осокин
1.10 Главная дорога
1.45 Центр помощи «Анастасия»
2.35 «В зоне особого риска»
3.00 Т/с «ДЕТЕКТИВ РАШ»
5.00 Т/с «ЗНАКИ СУДЬБЫ»

## ВТОРНИК, 03.04

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.35, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!»
10.55 Модный приговор
12.20 «Криминальные хроники»
12.55 «Право на защиту»
14.00 Другие новости
14.20 Понять. Простить
15.15 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.00 Т/с «СЕРДЦЕ МАРИИ»
18.45 «Давай поженимся!»
19.50 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ОТРЫВ»
22.30 «Краткий курс счастливой жизни»
23.55 К 80-летию режиссера. «Жертвоприношения Андрея Тарковского»
1.00 Х/ф «ЗЕРКАЛО»
3.05 Х/ф «ПРИМАНКА: ВТОРОЕ ОБОЛЬЩЕНИЕ»

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «С новым домом!»
9.45 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 16.45, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
13.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 «Брачное агентство Николая Баскова»
18.50 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ШАПОВАЛОВ»
22.55 Специальный корреспондент
23.55 «Альта» против рейха»
0.55 Вести +
1.15 «Профилактика»
2.25 «Честный детектив»
3.00 Т/с «БИЛЛ ИНГВАЛ-2»
4.15 «Городок»

### ЧУВАШИЯ

